Налук инспекцийĕнчен пĕлтереççĕ

# Çĕнĕлĕхсене пĕлни пăсмасть

## *Тупăш çине хуракан пĕрлехи налук (ЕНВД)*

2008 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса ваккăн тавар сутассипе çыхăннă ĕç-хĕлре тупăш çине хуракан пĕрлехи налук (ЕНВД) тӳлессипе улшăнусем пулса иртрĕç. Ваккăн тавар сутнă çĕрте пĕрлехи налук суммине палăртнă чухне предпринимательство ĕçне хаклакан кăтартусене тата уйăхра илекен база тупăш шайне шута илеççĕ:

1. Стационарлă суту-илӳ сетĕнче ваккăн тавар сутакан суту-илӳ залĕнче – кашни тăваткал метршăн 1800 тенкĕ.

2. Стационарлă тата стационарлă мар суту-илӳ сетĕнче ваккăн тавар сутакан суту-илӳ объектĕнче, сутă тумалли лаптăк 5 тăваткал метртан иртмест пулсан – 1 суту-илӳ вырăнĕшĕн 9000 тенкĕ.

3. Стационарлă тата стационарлă мар суту-илӳ сетĕнче ваккăн тавар сутакан суту-илӳ объектĕнче, сутă тумалли лаптăк 5 тăваткал метртан иртет пулсан – кашни тăваткал метршăн 1800 тенкĕ.

4. Тупăш çине хуракан пĕрлехи налука (ЕНВД) пассажирсем илсе çӳрекен организацисемпе предпринимательсем транспорт хатĕрĕсем çинчи лармалли вырăнсене кура тӳлеççĕ (РФ Налук кодексĕн 346-мĕш статйин 3-мĕш пункчĕ).

5. Суту-илӳ вырăнĕсемпе стационарлă мар суту-илӳ сечĕ валли (прилавоксем, палаткăсем, ларексем, контейнерсем, бокссем т. ыт. те), обществăлла апатланăва йĕркелеме (ятарлă залсăр пулсан та) çĕр участокĕ аренда шучĕпе уйăрса пани çĕнĕ ĕç-хĕл шутне кĕрет. Уншăн ЕНВД тӳлес пулать.

ЕНВД енĕпе налук базине шутламалли К-1 коэффициент-дефлятора Раççей Федерацийĕн Экономика аталанăвĕпе суту-илӳ министерстви 2008 çул валли 1,081 тесе палăртнă.

2008 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса çак ĕç-хĕлсемшĕн ЕНВД тытмаççĕ:

– баллонсенчи газ сутни, груз турттармалли автомашинăсем сутни, льготнăй (тӳлевсĕр) майпа эмелсем пани, интернет суту-илĕвĕ урлă посылкăсем ярса пани ваккăн тавар сутнин шутне кĕмест, вĕсемшĕн ЕНВД тӳлемелле мар;

– автомашинăсене гарантипе юсани;

– вĕрентӳ, сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă пулăшу учрежденийĕсем обществăлла апатлану енĕпе панă услугăсемшĕн.

**ÇĔР НАЛУКĔ**

Раççей Федерацийĕн Правительствин 2008 çулхи февралĕн 7-мĕшĕнчи «Çĕр участокĕсен кадастр хакне налук тӳлекенсем патне çитермелли йĕрке çинчен» 52 № постановленийĕпе килĕшӳллĕн куçăмсăр объектсен кадастрĕн федераллă агентствисен территори органĕсем çĕр налукне тӳлекенсене çĕр участокĕсен кадастр хакĕ пирки сведенисене тӳлевсĕр пама тивĕç. Çавна валли налук тӳлекенĕн «Куçман пурлăхăн патшалăх кадастрĕ çинчен» Федераллă саккунăн 14-мĕш статйипе килĕшӳллĕн заявлени çырса памалла. 2008 çулхи мартăн 1-мĕшĕччен асăннă сведенисене «Куçман пурлăхăн патшалăх кадастрĕ çинчен» Федераллă саккунăн 22-мĕш статйипе пăхнă йĕркепе панă пулнă.

Кунпа пĕрлех çĕр налукĕ тӳлес ыйтупа çĕр участокĕсен кадастр хакĕ пирки сведенисене куçман пурлăх объекчĕсен кадастрĕн федераллă агентствин официаллă сайчĕ çинче Интернет сечĕ урлă пĕлме пулать.

**ТРАНСПОРТ НАЛУКĔ**

Уйрăм çынсен хăйсен автотранспорт хатĕрĕсемшĕн 2007 çулшăн налук тӳлемелли вăхăт мартăн 31-мĕшĕнче тухрĕ. Налук ставки двигатель хăватĕнчен, транспорт хатĕрĕн категорийĕнчен, унăн шăнăçулăхĕнчен килет.

Чăваш Республикин территорийĕнче транспорт налукне тӳлессинчен çаксене хăтарнă:

– Совет Союзĕн Геройĕсене, Раççей Федерацийĕн Геройĕсене, Мухтав орденĕн тулли кавалерĕсене;

– инвалидсене, инвалид-ачасене, Чернобыльти атом электростанцийĕнчи катастрофăна пула, Семипалатинск полигонĕнче ядерлă хĕç-пăшала тĕрĕсленĕ чухне, 1957 çулта «Маяк» производство пĕрлешĕвĕнчи инкеке пула радиаци илнисене;

– оборона, спортпа техника организацийĕсемпе обществисене, потребительсен кооперацийĕсен организацийĕсене.

**Е. АРСЕНТЬЕВА,**
**налук инспекцийĕн налук тӳлекенсем, вĕсене регистрацилес тата учета илес енĕпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ.**

Ырă ĕçсен çулталăкĕ

# *Ĕçре сатур, ялта ятлă*

Тăван ен историйĕпе кăсăкланнă май эпĕ хамăр тăрăхра пултаруллă çынсем сахал маррине тишкертĕм. 2008 çул Ырă ĕçсен тата Çемье çулталăкĕ пулнă май манăн Чамăш ялĕнче пурăнакан Скворцовсен ырă ĕçĕсем çинчен каласа парас килет.

Çак çемье 1987 çулта Чамăш ялĕнчи шкул хваттерне пурăнма килет. Юрăпа Ира – çамрăк специалистсем. Оринин шкулĕнче ĕçлеме тытăнаççĕ.

1988 çулта Орининти Культура çуртĕнче «Шуракăш» юрăпа ташă пултарулăх ушкăнне йĕркеленĕ. Скворцовсем юрăташăна питĕ юратаççĕ, çавăнпа çак ушкăна çӳреме тытăнаççĕ. Унтанпа 20 çул çитет кăçал. Вĕсем вара паянхи кун та çак ансамбльте юрлаççĕ.

Çак вăхăт сахал мар вăл. Кунĕпе ĕшеннĕ хыççăн чун туртнипе, юрра-ташша кăмăлланипе, культурăна малалла аталантарас тĕллевпе хăйсен пултарулăхĕпе 20-мĕш çул çынсене савăнтараççĕ.

Скворцовсем 2004 çулта район администрацийĕ йĕркеленĕ «Çулталăкри чи лайăх çемье» конкурса хутшăннăччĕ. Унта вĕсем малти вырăна тухма пултарнă, Тав çырăвĕпе хаклă парне илме тивĕç пулнă. Юрăпа Ира Атапайри вĕрентӳпе культура центрĕнче тĕрлĕрен мероприятисем, конкурссем ирттерме те ӳркенсе тăмаççĕ.

Юрий Георгиевич – Чамăш ялĕнче 1996 çултанпа ял старости. Кулленхи пурнăçпа çыхăннă ыйтусене татса парасси, ялта тирпей-илем кĕртесси, пушартан сыхланасси, пĕве юсасси, выльăхсене улăха кăларма выльăх кĕтсе çӳрекенсен черетне йĕркелесси, картасене юсасси, шыв ыйтăвĕсене татса парасси вăл хутшăнмасăр пулмасть.

2003 çулта «Чи лайăх та тирпейлĕ ял» конкурсра Чамăш ялĕ районта 2-мĕш вырăн йышăннă, иккĕмĕш степеньлĕ диплома тата укçан премие тивĕçнĕ.

Ял старостин пуçарăвĕпе тата ял халăхĕ пулăшнипе, шкул ачисем тăрăшнипе нумай çул ĕнтĕ Чамăш ял уявне çуллен паллă тăваççĕ.

Юрий Георгиевич Атапай шкулĕнче математика тата ОБЖ учителĕ пулса ĕçлет. Тăрăшулăхне кура ăна ЧР Вĕрентӳ министерствин Хисеп грамотипе те наградăланă.

Ирина Германовна та Оринин шкулĕнче 20 çул ытла тăрăшать. Вăл нумай çул шкулта ачасен театр кружокне ертсе пынă. Ачасем театр искусствипе смотр-конкурссене хутшăнса малти вырăнсене пĕрре кăна мар йышăннă.

Скворцовсем икĕ ывăл ӳстереççĕ. Асли Володя аслă пĕлӳ илнĕ, Шупашкар хулинче ĕçлет. Георгий кăçал 11-мĕш класран вĕренсе тухать.

Эпĕ сăнанă тăрăх хаваслă, ырă кăмăллă çынсем яланах пур çĕрте те ĕлкĕреççĕ, ыттисемшĕн те сăваплă ĕç тума тăрăшаççĕ.

Юрăпа Ирина Скворцовсене, Чамăш ялĕнчи тĕрлĕ çулсенче «Шуракăш» юрăпа ташă ансамбльне çӳренĕ тата хальхи вăхăтра çӳрекен çамрăксене К. Григорьевана, К. Васильева, А. Ботникова, театра хутшăннă тата халĕ нумай çул хушши театрта вылякан Людмила Всеволодовна Курбанована çывхарса килекен Театр кунĕ ячĕпе ăшă кăмăлтан саламлатпăр. Пултарулăх шайĕ вĕсен ялан ӳссе пытăр. Тайма пуç вĕсене яваплăха туйса тимленĕшĕн. Чамăш ялĕнче çавăн пек пултаруллă çынсем пурăннишĕн савăнатпăр.

**Чамăш ялĕнче пурăнакансем сĕннипе В. ВЕРШКОВА.**

Шкулсенчен хыпарлаççĕ

## Илемлĕ ташă тĕнчинче



Москакасси шкулĕ çумĕнче Муркашри ача-пăча ӳнер шкулĕ йĕркеленни пĕрремĕш çул мар ĕнтĕ. Çав тапхăрта ачасем Москакасси ял тăрăхĕнче пурăнакансене мĕн тери илемлĕ, савăнăçлă ташăсем парнелемерĕç пулĕ. Кашни ташши хăйне евĕр тĕнче, хăйне евĕр илем. Пушкăртсен, тутарсен, еврейсен, вырăссен, чăвашсен ташшисем кашни çынна тыткăнласа куракансен кăмăл-туйăмне пуянлатаççĕ.

Ӳнер шкулне ачасем 6 çултан çӳреме тытăнаççĕ, ташă тĕнчинче пĕрремĕш утăмсем тăваççĕ. Ташша чунтан парăннă ачасем вара шкул пĕтерсе аслă шкулта вĕренеççĕ пулсан та каç пулсан ташă класне васкаççĕ. Ташă класне вара 16 çул ĕнтĕ пĕр улшăнмасăр Ирина Васильевна Петрова ертсе пырать. Питех те пултаруллă педагог вăл.

Нумаях пулмасть ташă коллективĕ республикăри «Литературная Чувашия: книга года – 2006» фестивале хутшăнса Москакассинче иртнĕ «Пукане уявĕнче» «Пуканепе ташлар-и» çĕнĕ ташăпа савăнтарчĕ. Коллектив республикăра та, районта та иртекен конкурссенче малта пулни пире савăнтарать, мăнаçлантарать.

**Р. СИБЯКОВА,**
**Москакассинчи библиотека библиотекарĕ.**
**Сăн ӳкерчĕкре: акă вĕсем, ташă ăстисем!**

## Çемье командисем чылай хутшăнчĕç

Çемье çулне халалласа Шурча шкулĕнче тĕрлĕрен мероприятисем сахал мар иртеççĕ. Нумаях пулмасть вара кунта «Атте, анне тата эпĕ – спортпа туслă çемье» конкурс пулчĕ. Унта кĕçĕн классенче вĕренекенсем хăйсен ашшĕ-амăшĕсемпе хутшăнчĕç. Эпĕ те аттепе тата йăмăкпа пĕрле хутшăнтăм конкурса.

Çемье командисем сахал мар пулчĕç. Кунта чи малтанах Андреевсене, Барзаевсене, Васильевсене, Тимофеевсене, Петровсене, Андриановсене, Львовсене, Фадеевсене, Черкесовсене, Константиновсене, Федоровсене, Даниловсене асăнса хăвармалла.

Çак мероприятие физкультура учителĕ О.В. Бардасова ертсе пычĕ. Çемье командисем пĕр-пĕринпе нумай интереслĕ вăйăсенче тата конкурссенче вăй виçрĕç. Вĕсем пурне те килĕшрĕç.

Жюри членĕсем итогсене пĕтĕмлетнĕ май пултаруллă командăсене Хисеп грамотисемпе чысларĕç. Кун пек мероприятие çитес çул та ирттерме калаçса татăлчĕç.

**Настя ВАСИЛЬЕВА,**
**Шурча шкулĕнче 4-мĕш класра вĕренекен.**
**Сăн ӳкерчĕкре: хаваслă иртрĕ çемье командисен конкурсĕ.**



Конкурс

# Лайăх апатлану та пысăк пĕлтерĕшлĕ




2007 çулхи ноябрĕн 19-мĕшĕнчен тытăнса кăçалхи мартăн 1-мĕшĕччен республикăра «2007–2008 вĕренӳ çулĕнчи чи лайăх шкул столовăйĕ» конкурс иртнĕ. Ăна ирттерекенĕ – Чăваш Республикин Экономика аталанăвĕпе суту-илӳ министерстви.

Конкурсăн 1-мĕш тапхăрĕ районта иртнĕ. Унта районти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан 13 шкул коллективĕ хутшăннă. Чи пултаруллисем тесе Муркаш, Москакасси тата Оринин шкулĕсене палăртнă. Районти комисси конкурсăн 2-мĕш тапхăрне хутшăнма республикăна Муркаш шкулне яма йышăннă.

Итогсене хула шкулĕсемпе ялсенчи шкулсем хушшинче уйрăммăн палăртнă. Ялсенчи шкулсен столовăйĕсем хушшинче вара Муркашсене çитекенни пулман, вĕсем тивĕçлипех 1-мĕш вырăн йышăнма пултарнă.

Республикăра мала тухнă май мартăн 31-мĕшĕнче шкул администрацине Шупашкарти 5-мĕш номерлĕ гимназире савăнăçлă лару-тăрура саламланă, хаклă парне парса чысланă.

Çавна та каласа хăвармалла. Шкулта 734 ача вĕренет. Вĕсене столовăйра пĕлсе тата пахалăхлă тăрантарни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Кунта вара Е.В. Павлова шеф-повар, К.И. Музыкова, А.В. Романова, Н.Е. Петрова поварсем, Н.Д. Иванова кухня ĕçченĕ – хăйсен ĕçĕнче чăн-чăн ăстасем.

**С. ТАРАСОВА,**
**район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн хуçалăхпа эксплуатаци ушкăнĕн инженерĕ.**
**Сăн ӳкерчĕкре: шкул директорĕ В.В. Ялушкин тата шкул столовăйĕн шеф-поварĕ Е.В. Павлова.**

Юбилей

## Саламлатпăр



Юратнă аннене, хунямана, кукамая, асаннене – Çулав ялĕнче пурăнакан **Ксения Касьяновна ОСИПОВАНА** çак кунсенче 75 çул тултарнă ятпа хĕрӳллĕн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, юхан шыв юххи пек вăрăм кун-çул тата канлĕ ватлăх сунатпăр, ачусемпе мăнукусенчен пархатар курса пурăнмалла пултăр. Ачусене ăшшăн кĕтсе илнишĕн, ыр кăмăлпа ăсатса янишĕн сана тайма пуç.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕсем, ывăлĕ, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, тăванĕсем.**

Юратнă анне, кукамай – Хорнуй ялĕнче пурăнакан **Лидия Алексеевна АФАНАСЬЕВА** апрелĕн 3-мĕшĕнче 80 çул тултарчĕ. Çав ятпа эпир ăна чун-чĕререн саламлатпăр. Пире, пилĕк ачине, ӳстерсе ура çине тăратнăшăн çĕре çити пуç таятпăр. Вăл пурришĕн савăнатпăр, мухтанатпăр. Нихăçан та ан чирле, ĕмĕрӳ вăрăм пултăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕсем, хĕрĕсем, кинĕ, кĕрĕвĕсем, мăнукĕсем тата çывăх тăванĕсем.**

Шетмĕпуç ялĕнче пурăнакан юратнă аннене, **Елена (Марцелина) Назаровна ПЕТРОВАНА** 70 çулхи юбилей ячĕпе



чĕререн саламлатпăр. Аннеçĕм, пурнăçри йывăрлăхсене пăхмасăр, хăвна шеллемесĕр, пире, 5 ачуна, ура çине тăратнăшăн, вĕрентсе кăларса пурнăç çулĕ çине тăратнăшăн çĕр çити пуç таятпăр. Халĕ эпир пурте çемьеллĕ, ача-пăчаллă пулсан та, эсĕ пирĕн чи çывăх, чи хаклă çын çĕр çинче.

**Сана саламласа 2 хĕрĕпе кĕрĕвĕсем, 3 ывăлĕпе кинĕсем, Петровсен, Сорокинсен, Сибяковсен çемйисем тата мăнукĕсем.**



Çатракасси ял тăрăхне кĕрекен Ятман ялĕнче çуралса ӳснĕ, пĕтĕмĕшле 32 çул водительте ĕçленĕ тата юлашки 12 çулне паянччен районти 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕнче пушар машинин водителĕнче вăй хуракан хисеплĕ ĕçтешĕмĕре тата тарават юлташăмăра **Николай Тарасович ПАВЛОВА** 50 çулхи юбилейĕпе ăшшăн саламлатпăр, татах та нумай çул ырă та сывă пурăнма телей, ĕçре ăнăçу, çемьере юратупа килĕшӳ сунатпăр.

Николай Тарасович! Сан пек шанчăклă юлташсем çумра пулсан вăй илнĕ пушар та хăрушă мар, ĕçри йывăрлăхсем те иккĕмĕш вырăна тухаççĕ, малашлăх ĕмĕтсем пысăк шанчăкпа çуралаççĕ. Тавах сана эсĕ пурришĕн!

**Саламлаканĕсем: 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕн ĕçченĕсем.**



Пирĕн хаклăран та хаклă, чи хисеплĕ çыннăмăр – Шаптак Муркаш ялĕнче пурăнакан **Александра Сергеевна РОДИОНОВА** паян 80 çул тултарать. Çав юбилей ячĕпе ăна чунтан тухакан чи ăшă кăмăлпа саламлатпăр. Мĕн ачаран пуçласа ватлăх кунĕсемччченех тăван колхоз уйхирсенче те фермăра вăй хурса сахал мар Хисеп грамотисене тивĕçнĕ, çавăнпа эпир санпа мухтанатпăр, эс пурришĕн савăнатпăр. Тавах сана эсĕ пурришĕн. Малашнехи пурнăçра сана мĕн ырри-лайăххине кăна сунатпăр. Сывлăхлă пул, ан чирле, малашне те пире савăнтарса пурăн.

**Салампа: Голубевсен, Крючковсен çемйисем тата çывăх тăванĕсем.**